# ГЕОРГИ ЛЕОНИДЗЕ

*Грузи*

## ГРУЗИ ЭЛЧЕЛĔ

Кам хурланнă пирĕн йывăр
Кĕрешӳшĕн тĕнчере?
Кам ăнланнă ĕмĕр-ĕмĕр
Тăшманпа вăрçан çĕре?
Грузи çĕрĕ—Сакартвело—
Тутлă çимĕçпе пĕрех,
Кам иртейнĕ хапсăнмасăр?
Кам çăтас темен пире?
Çак Европа хапхи умĕн
Хирĕлсе мĕн ĕмĕрне,
Хамăрпа эпир картланă
Ордасен çулне-йĕрне.

Çĕршыва тăшман çаратнă,
Кам ун чух пире хĕрхеннĕ?
Кам чуна пĕрре пулин те
Пулăшу парса çĕкленĕ?

Пирĕн юн Кура пек юхнă,
Шух Риони пек кĕрленĕ.
Пур çĕре те çулăм хыпнă,
Кăмрăкланнă çĕр, кĕлленнĕ.

Шав тăшман. Ăçтан? Мĕн чухлĕ?
Виç-ха эсĕ тинĕсе!
Тăвăл пек аркатнă, ишнĕ
Хулана, яла вĕсем.
Садсене кышланă, хăртнă
Ют çĕршыв шăрчăкĕсем—
Тĕрĕксем те çеçенхирĕн
Урăм-сурăм йăхĕсем.

Пушă хир туса хăварнă
Çĕршыва тăшман хаярĕ.
Çапăçса ĕшеннĕ халăх
Хурланса калана мар-и?—
„Ку енче—хăватлă юхăм,
Леш енче—сӳнми пушарĕ,
Путарасшăн пире шывĕ,
Çунтарасшăн вут-кăварĕ!"

Çав-çавах, темле хĕссен те,
Ăхлатман пирти этем,
Ту хушшисене пытаннă,
Тупнă чул шăтăкĕсем;
Чун-халне те вăл усранă,
Ăс вăйне те, тӳснĕçем;

Çук, куççуль тăкман, аманнă
Барсăн витĕр куçĕсем!

Сăнчăр пăвнă харсăр халăх
Хăталас тимне упранă,
Авалтан ăна хăватлă
Амиран[1] хавхалантарнă.
Авалхи тусем çинчен вăл
Тĕнчене пăхса сăнанă,
Унăн шухăшĕ, ун чунĕ
Башньăсем пулса хăпарнă.

Акă ту качакисем çеç
Çӳрекен сăрт тӳпинче
Чул кермен ларать тем çӳлĕш,
Тĕрлĕ сăн гранит çинче:
Вăчăра пек вĕççĕр тĕрĕ,
Пăлансем ун айĕнче,
Тигрпа грифон вăрçаççĕ,
Иçĕм йывăç маччинче.

Кайăк тĕреллĕ, сархайнă
Авалхи кĕнекесемĕр,
Хупписем çинчи эрешлĕ,
Ылтăнланă çырусемĕр,
Ылтăнланă çутă хĕç те
Çаврака йĕс хӳтлĕхсемĕр,
Ту çинĕ тем çӳлĕш, хулăн
Купаланă хӳмесемĕр!

[1] Грузинсен Прометейĕ.

Камăн вăйĕ çак? Мĕн чухлĕн
Пулнă ятсăр ăстасем,
Хут çине те, чул çине те
Аслă шухăш çырнисем,
Пултаруллă, сыпăçуллă
Тăрăшса ĕçлекенсем!
Башня, хроника, чиркӳ-и—
Ĕçĕ чĕрĕ-ха вĕсен.

Ăçтарах хăйсем выртаççĕ?
Кам ăна каласа парĕ?
Ăçтарах çĕршыв мухтавĕн—
Руставелийĕн масарĕ?
Ăçтарах Саба-Сулханăн?[1]
Кам Бесикие[2] пытарнă?
Ĕмĕтре кăна Арагви
Курнисем тем чухлĕ мар-и?

Кам хисеплесе кăларĕ
Паттăр çар çыннисене:
Парăнусăр Саакадзе
Ертсе пынăскерсене,
Арăслан пек вăрçнă Зезву
Çĕклентернĕскерсене,

[1] Саба-Сулхан Орбелиани (1658—1755)—грузин писателĕ.
[2] Бесики (Виссарион Габашвили)—грузинсен чаплă лирикĕ (1755—179...).

Е Шалва Ахалцихели[1]
Хавхалатнăскерсене?

Паттăрсемшĕн хĕрхенӳсĕр
Пулнă çакă çут тĕнче:
Сахал мар куççуль те, юн та
Авалхи çырусенче.
Астăвар тавăраймасăр
Миçе çын пĕтни çинчен,
Саакадзен çивĕч хĕçĕ
Хуçăлса йĕни çинчен!

---

[1] Саакадзе, Зезву, Ш. Ахалцихели—грузинсен паллă çарпуçĕсем.